чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

241 /26396/№ Кĕçнерни кун, 2013, раштав (декабрь), 19 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

## Олимп çулăмĕн эстафети – пысăк уяв

***Чăваш Енре Олимп çулăмĕн уявне пурте чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Эстафетăччен 8 кун кăна юлчĕ. Йĕркелӳçĕсем пĕлтерĕшлĕ мероприятие мĕнле хатĕрленни çинчен пресс-конференцире каласа пачĕç.***

Унта ЧР физкультурăпа спорт тата туризм министрĕ Сергей Мельников, Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Алексей Маклыгин, ЧР информаци политикипе массăллă коммуникацисен министрĕн çумĕ Любовь Шемарина, ЧР ÇÇХПИ пуçлăхĕ Владимир Романов, ШĔМĕн общество йĕркелĕхне сыхлас енĕпе ĕçлекен управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Сергей Рыбаков тата ыттисем хутшăнчĕç.

Эстафета маршручĕпе Алексей Маклыгин паллаштарчĕ. Олимп вăййисен тĕп символĕ кăнтăрла 12 сехетре чукун çул вокзалĕнче старт илĕ. Унтан хулан тĕп урамĕсемпе çула тухĕ: Ленин проспекчĕ, Андриян Николаев, Калинин, Текстильщиксен, Зоя Яковлева, Иван Франко урамĕсем, Юхан шывçăсен тӳремĕ, Константин Иванов урамĕ, Мускав, Максим Горький проспекчĕсем, Университет, Павлов мичман, Гузовский, Чул хула урамĕсем, Президент тата Электроаппаратчиксен бульварĕсем, Карл Маркс, Гагарин, Чапаев, Çĕрпӳ урамĕсем /тĕплĕнрех хула администрацийĕн сайтĕнче паллашма пулать/. Çавăн пекех хулари паллă вырăнсенче те пулĕ: Çĕнтерӳ паркĕ, юхан шыв порчĕ, Анне палăкĕ, кӳлмек хĕрри.

Алексей Юрьевич пĕлтернĕ тăрăх – эстафета виçĕ тапхăрпа иртĕ. Пĕрремĕшĕ – чукун çул вокзалĕнчен пуçласа Чăваш патшалăх университечĕн çурçĕр-хĕвел анăç районĕнче вырнаçнă корпусĕ патне çитиччен. Иккĕмĕшĕ – тĕп тапхăрсенчен пĕри – Хĕрлĕ лапам. Олимп çулăмне унта çуна çинче ларакан Хĕл Мучипе унăн хуралçисем илсе килĕç. Чăваш патшалăх драма театрĕ умĕнче чаплă концерт иртĕ. Сывă пурнăç йĕркине тытса пыракансем Хĕл Мучипе пĕрле зарядкăна тăрĕç, çĕршывĕпе палăрнă трактор-шоу çынсене тимĕр «урхамахсен» ăсталăхĕпе тĕлĕнтерĕ. Юлашки тапхăр – «Олимпийский» стадион, унта 18 сехетре пысăк та савăнăçлă уяв пуçланĕ.

Сергей Мельников министр çулăма пĕрремĕш йăтма Олимп чемпионкине Елена Николаевăна шаннине пĕлтерчĕ. Стадионта вара çулăма Олимп чемпионĕ, СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Владимир Воронков чĕртĕ. Вĕсемсĕр пуçне Олимп вăййисен тĕп символне 161 çын йăтĕ. Вĕсен йышĕнче РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ, «Раççей-2» телеканалăн комментаторĕ Ольга Богословская та пур. Вăлах пирĕн республикăра Олимп çулăмĕн эстафети еплерех иртни пирки репортаж хатĕрлĕ. Çавăн пекех эстафетăна 1000 яхăн волонтер – спорт шкулĕн вĕренекенĕсемпе студентсем, хастар яшсемпе хĕрсем – хутшăнĕç.

Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ 10 сехетрен пуçласа 22 сехетчен эстафета иртекен çулсемпе автомобильсене тата общество транспортне вăхăтлăха çӳреме чарасси çинчен йышăну кăларнă. Çавăнпа йĕркелӳçĕсем çул çине автомобильсĕр тухма ыйтаççĕ, çавна май раштавăн 27-мĕшне çуран çӳремелли кун тесе палăртнă. «Енчен те эстафета иртекен урамсенче тăватă кустăрмаллă тусăра лартса хăваратăр тăк – ăна штрафстоянкăра шырама тивĕ», – асăрхаттарчĕ ЧР ÇÇХПИ пуçлăхĕ Владимир Романов. Каласа хăвармалла: çав кун полицин 2000 яхăн ĕçченĕ йĕркелĕхшĕн яваплă пулĕ. Тепĕр çĕнĕлĕх – чылай предприятипе организацире ĕçлекенсем валли канмалли кун тума сĕннĕ. 5-11-мĕш классенче вĕренекенсем валли спортпа сывлăх кунĕ иртĕ, çав вăхăтрах ача сачĕсемпе пуçламăш шкулсем малтанхи графикпах ĕçлĕç. «Олимп çулăмĕн эстафети республика кун-çулне кĕрсе юлмалли уяв, çавăнпа вăл йĕркеллĕ ирттĕр», – пĕтĕмлетрĕç юлашкинчен пресс-конференцие хутшăнакансем.

**Андрей МИХАЙЛОВ**

*Йăлана кĕнĕ турнир*

# Спортпа туслă çын вăйлă та хăюллă

***Ĕнер Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Раççей Федерацийĕн Геройĕн Николай Гаврилов генерал-лейтенантăн парнисемшĕн иртекен Пĕтĕм Раççей турнирне килнĕ пысăк хăнасемпе – РФ ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен федерацийĕн президенчĕпе Михаил Мамиашвилипе, «Динамо» общество председателĕпе Владимир Проничев генералпа тата, паллах, Николай Гавриловпа тĕл пулчĕ. Уçă калаçăва ЧР физкультурăпа, спорт тата туризм министрĕ Сергей Мельников, ЧР шалти ĕçсен министрĕ Сергей Семенов генерал-майор, Шупашкар хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов хутшăнчĕç.***



«Чăваш çĕрĕ çинче иртекен турнира килекенсене эпир яланах хапăл йышăнатпăр. Çак ăмăртăва хутшăнакансен йышĕ çулсеренех ӳсет. Спорт мероприятине халăх кăмăлласа çӳрет. Нумаях пулмасть ирĕклĕ мелпе кĕрешекен хĕрсен хушшинче Раççей чемпионачĕ пулчĕ. Аван кĕрешрĕç пирĕн пикесем! Лайăх кăтартусемпе палăрчĕç. Çавăнпа арçынсене этемлĕхĕн черчен çуррийĕнчен юлмалла мар тесе houларăм. Паян та турнирта чи вăйлисем, чи маттуррисем кĕрешĕç. Чăваш наци кĕрешĕвĕ те йĕкĕтсене вăй-халлă, пиçĕ, харсăр пулма, Тăван çĕр-шыва юратма вĕрентет. Чăваш правительствин команди те тĕрлĕ шайри спорт ăмăртăвĕсене тăтăшах хутшăнать. Вĕсенчен яланах лайăх кăмăлпа таврăнатпăр. Шалти ĕçсен министерствин ĕçченĕсем те спортпа туслă»,– терĕ Михаил Васильевич.

Михаил Игнатьев Чăваш Ен çĕр-шывăн чи лайăх спорт регионĕ пулса тăнине, спорт енĕпе паракан наци премине тивĕçнине каларĕ. Çакă – влаç органĕсем физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ăнăçлă ĕçленин тата республикăра пурăнакансем сывă пурнăç йĕркине суйласа илнин кăтартăвĕ.



«Чăваш Ен чечекленнине курма мана сĕре кăмăллă. Чăваш Республикинчен Олимп чемпионĕсем те тухнă. Шанăç кӳрекен спортсменсем халĕ те пур. Яш-кĕрĕмпе хĕрупраç спортпа тусли, сывă пурнăç йĕркине пăхăнни савăнтарать»,– терĕ Николай Гаврилов.

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Николай Гаврилова физкультурăпа спорт юхăмне аталантарас тата çамрăксене патриот воспитанийĕ парас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн тав турĕ. Михаил Игнатьев Михаил Мамиашвилипе Владимир Проничев генерала Чăваш Республикин символĕсемлĕ сехечĕсене парнелерĕ.

* * *

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн спорт керменĕнче Раççей Геройĕн, Шупашкар хулин Хисеплĕ гражданинĕн, авиацин генерал-лейтенанчĕн Николай Гавриловăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен турнирĕ иртрĕ.

Савăнăçлă парадра спортсменсемпе тренерсене авиацин генерал-лейтенанчĕ Николай Гаврилов саламларĕ. Вăл вĕсене ăмăртăва хутшăннăшăн тав турĕ, малашлăхра ăнăçу сунчĕ. «Кашни спортсмен кавир çине çĕнтерме тухать. Çакă – чи пĕлтерĕшли. Малта пулма ăнтăлни спортра кăна мар – кулленхи пурнăçра та кирлĕ», – терĕ генерал. Турнира Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев та килсе çитрĕ. «Спортпа туслă çын вăйлă та хăюллă, унăн шухăш-кăмăлĕ çирĕп, вăл пур йывăрлăха та çĕнтерме пултарать. Ирĕклĕ кĕрешӳ – хастаррисем валли, çавăнпа ăмăртусенче паттăррисем мала тухаççĕ», – терĕ Михаил Васильевич Николай Гаврилова Тав хучĕпе чысланă май.

Спорт уявне РФ ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен федерацийĕн президенчĕ Михаил Мамиашвили, «Динамо» обществăн председателĕ Владимир Проничев генерал, Раççей Геройĕ, ФХС полковникĕ Юрий Недвига, Олимп вăййисен виçĕ хут чемпионĕ Бувайсар Сайтиев, Раççейĕн пĕрлештернĕ командин аслă тренерĕ Хаджимурат Магомедов, Европа тата тĕнче чемпионĕ Сергей Корнилаев, РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Джамбулат Тедеев тата ыттисем хутшăнчĕç, пухăннисене ырă сăмахсемпе хавхалантарчĕç.

Турнира Шупашкарта 2005 çултанпа йĕркелеççĕ. Çулленех вăл И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн спорт комплексĕнче иртет. 2008 çултанпа çĕнтерӳçĕсене спорт мастерĕ ята пама пуçланă хыççăн ку ăмăртун сумĕ тата та ӳснĕ. Кăçал унта Раççейĕн 13 регионĕнчи 220 чи вăйлă спортсмен хутшăнчĕ. Вĕсем – Дагестанран, Мари, Мордва, Тутар, Чăваш республикисенчен, Калининград, Мускав, Чул хула, Эрĕнпур, Ростов, Чĕмпĕр облаçĕсенчен, Ханты-Манси автономи округĕнчен, Мускав хулинчен. Пăхаттирсем медальсен 19 комплекчĕшĕн кĕрешрĕç. Çĕнтерӳçĕсене дипломсемпе, медальсемпе тата хаклă парнесемпе чысларĕç. Маттуррисене çавăн пекех «Çĕнтерӳ патне ăнтăлнăшăн», «Ăсталăха чи лайăх кăтартнăшăн» ятарлă парнесемпе хавхалантарчĕç.

**Роза ВЛАСОВА,**
**Андрей МИХАЙЛОВ.**

ЧР ПА пресс-службин тата Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем



## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2013 çулхи раштавăн 18-мĕшĕнче кăларнă 131-мĕш укзĕпе килĕшӳллĕн нумай томлă чăваш энциклопедине хатĕрлес тата пичетлесе кăларас енĕпе наукăпа тĕпчев ĕç-хĕлĕнче тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Чăваш Республикин «Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ» ăслăлăх бюджет учрежденийĕн наукăн ертсе пыракан сотрудникне, истори наукисен кандидатне, доцента **Георгий Борисович МАТВЕЕВА,** Чăваш Республикин Аслă сучĕн председателĕн çумне, юридици наукисен докторне, профессора **Николай Кондратьевич ФИЛИППОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИ УМĔНЧИ ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇСЕМШĔН»** орден медалĕпе наградăланă, федерацин аслă професси пĕлĕвĕ паракан «И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ» патшалăх бюджет вĕренӳ учрежденийĕн кафедра заведующине, физикăпа математика наукисен докторне, профессора **Виктор Сергеевич АБРУКОВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН НАУКĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

изобретатель ĕç-хĕлĕнче нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин «Йĕпреç районĕн больници» бюджет учрежденийĕн стационарĕн хирурги уйрăмĕн заведующине – врач-хирургне, медицина наукисен кандидатне **Юрий Георгиевич АНДРЕЕВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ИЗОБРЕТАТЕЛĔ»** хисеплĕ ят панă;

культурăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕн пĕрремĕш çумне **Альбина Ивановна АЛЕКСЕЕВĂНА,** Чăваш Республикин вăтам професси пĕлĕвĕ паракан «Шупакарти Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищи /техникум/» бюджет вĕренӳ учрежденийĕн преподавательне **Ирина Владимировна НИКИТИНĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

промышленноçри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн Шупашкар хулинчи «ЭКРА» наукăпа производство предприятийĕ» тулли мар яваплă обществăн радиоэлектроника аппаратурин тата приборсен монтажникне **Ольга Юрьевна РОЖКОВĂНА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă;

физкультурăпа спортри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн Чăваш Республикин Физкультура, спорт тата туризм министерствин пай пуçлăхне **Владимир Афиногенович ИГНАТЬЕВА «ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ФИЗКУЛЬТУРĂПА СПОРТĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ»** хисеплĕ ят панă.

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### Татьяна Семеновăн – «ылтăн»!

***Италире иртекен Пĕтĕм тĕнче Универсиадинче республикăн пултаруллă биатлонçи, Раççей спорт мастерĕ Татьяна Семенова хутшăннине хаçатăн иртнĕ кăларăмĕсенче пĕлтернĕччĕ.***

Савăнăçлă тепĕр хыпар çитрĕ: пирĕн ентеш эстафетăра ылтăн медаль çĕнсе илнĕ. Спринтерсен тупăшăвĕнче тата 10 километрлă дистанцире Çĕнĕ Лапсар пики икĕ «бронзăпа» пуянланнăччĕ.

Чăваш Еншĕн çакă пысăк çитĕнӳ. Юлашки хут пирĕн спортсменсем хĕллехи Универсиадăра 10 çул каялла вăй виçнĕ. Ун чухне республика чысне Татьяна Моисеева, Раиса Матвеева тата Геральд Салдимиров биатлонçăсем хӳтĕленĕ. Пуринчен ытларах Татьяна Моисеевăна ăнăçнă, вăл 1 «ылтăнпа» 2 «кĕмĕл» çĕнсе илнĕ.

**А.МИХАЙЛОВ.**

### Хĕллехи сезон уçăлнă

***Тавралăх шурă юрпа витĕнчĕ те спортпа туслисем йĕлтĕр çине тăчĕç. Çĕнĕ Лапсарти А.Тихонов ячĕллĕ спорт шкулĕнче хĕллехи сезон уçăлнине халалласа пысăк ăмăрту – хула чемпионачĕ иртнĕ.***

2006 çултанпа йĕркелекен эстафетăра студентсен, хулари шкулсенче вĕренекенсен, спорт шкулĕсенче ăсталăха туптакан çамрăк йĕлтĕрçĕсен командисем (пурĕ 64 спортсмен) вăй виçнĕ. Хĕрарăмсен ушкăнĕнче Олимп резервĕсен 2-мĕш спорт шкулĕн тата Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн командисене кая хăварса Шупашкарти политехника институчĕн пикисем мала тухнă. Арçынсен эстафетинче те политехника институчĕн каччисем палăрнă: финиша 66 минут та 58 çеккунтра вĕçленĕ. Чăваш патшалăх педагогика университечĕн тата электромеханика колледжĕн студенчĕсем те пьедестал çине хăпарнă.

**А.ПЕТРОВ.**

### Тăваттăн вилнĕ

***Инкек иртнĕ вырсарни кун каçхине Канаш районĕнче пулнă. Аварие сăлтавланă тесе Следстви комитечĕн вырăнти пайĕ район полицийĕн 27 çулти участковăйĕ тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарнă.***

Вăл «Фольксваген» автомобиль рулĕ умĕнче пулнă май Вырăскас Пикших ялĕ тĕлĕнче çулăн транспорт хирĕç килекен енне тухнă, «Лада Приорăпа» çапăннă. ВАЗăн 43 çулти водителĕ (Комсомольски районĕн çынни) тата унăн икĕ пассажирĕ – Патăрьел районĕн 53-ри арçыннипе пилĕк уйăхри ача – çавăнтах вилнĕ. Пĕчĕкскерĕн 34 çулти амăшĕ, Канаш районĕн хĕрарăмĕ, йывăр суранланнă, ăна çийĕнчех больницăна ăсатнă, анчах пурнăçне çăлса хăварма май килмен. Пуçне амантнă полицейские хăйне те больницăна илсе кайнă. Пĕрлех – унăн машинăра пулнă икĕ çулти ывăлне те.

Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх – аварире вилнĕ хĕрарăмăн пĕчĕк виçĕ ачи тăлăха юлнă, «Лада» водителĕн – çул çитмен икĕ ачи.

**Н.ДМИТРИЕВ.**

# Михаил Игнатьев Çырăвне хаклаççĕ



**Леонид НИКОЛАЕВ, Вăрнар район администрацийĕн пуçлăхĕ:** Бюджет ĕçченĕсен шалăвне пысăклатнипе пĕрлех вĕсен ĕç пахалăхне те çĕклемелле тенине уйрăмах çывăха илтĕм. Шел те, шăпах çак енĕпе хальлĕхе çитменлĕхсем пур – çынсем кăмăлсăрланнă тĕслĕхсем те çук мар. Бюджет тытăмĕсенче вăй хуракансем халăха кӳрекен пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕ лайăхланмалла – кун пирки иккĕленместĕп.

**Николай ГЛУХОВ, Патăрьел район администрацийĕн пуçлăхĕ:** Халăх культури – вăл аталанмалла. Вăл пулсан производствăри, строительствăри, ял хуçалăхĕнчи, ытти сферăри культура та пулĕ. Çак шухăша палăртни питĕ вырăнлă.



Тепĕр самант: вырăнти хăй тытăмлăх пĕлтерĕшне Владимир Путин Çырăвĕнче те палăртнăччĕ, çакăн пирки Михаил Игнатьев та каларĕ. Паян вырăнти хăй тытăмлăх – халăхшăн чи çывăх влаç органĕ, вăл граждансен нумай ыйтăвне татса пама тивĕç. Чылай ыйтăва татса парас енĕпе республика ăнăçлă ĕçлет. Калăпăр, Канаш монохула пулнă май малалла аталанĕ, ялсен территорийĕсем çĕнĕ шкулсем, садиксем кĕтеççĕ. Республика ертӳçисем ача сачĕсемпе çыхăннă ыйтăва татса пама шантарнăччĕ, калам: Патăрьел районĕнче черет çук. Çыру хамăр ертсе пыракан муниципалитетсен территорийĕсенче тата та çине тăрарах ĕçлеме хăват парать.

**Вячеслав АЛЕКСАНДРОВ, ЧР Обязательнăй медстраховани фончĕн директорĕ:**



Михаил Васильевич республика çитĕнĕвĕсем пирки каларĕ – вĕсем, куратпăр, пур. Анчах кашни темăпах татса памалли çивĕч ыйтусене асăнма та манмарĕ. Маншăн, финансистшăн, республика малашлăх бюджетне йышăнни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пурнăçламалли программа нумай. 2020 çулччenхи стратегие пурнăçлани кăна мар, 2030 çулччenхи стратеги пирки те калаçатпăр ĕнтĕ. Çырура палăртнă çул-йĕр унта та вырăн тупасса шанатăп. Чи малтанах – инноваци продукцийĕ кăларассине тĕпе хуни кăмăла кайрĕ. Палăртма кăмăллă: кĕске вăхăтра çакнашкал продукци тӳпи 7% ӳснĕ – нумай. Шăпах çакăнта – республика пуласлăхĕ.

Фонда ертсе пынă май, паллах, медицина ыйтăвĕсене çĕклени кăмăла кайрĕ. Диспансеризаци, медицина учрежденийĕсене тĕпрен юсани, пысăк технологисене çул пани – çакă халăх сывлăхне упрама, ăна çирĕплетме пулăшасси пирки иккĕленместĕп.

**Светлана ЕНИЛИНА, ЧР пурлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ:** Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырура республикăн çитес çулхи тата малашлăхри аталанăвĕн тĕп енĕсене уçăмлăн палăртнă. Чи пахи – халăх пурнăçĕн пахалăхне лайăхлатас ыйтăва çӳллĕ шайра çĕклени.



Вăл республика ертӳлĕхĕн тĕп тĕллевĕ пулнине никам та хирĕçлеймĕ. Патшалăх тата муниципалитет пурлăхĕпе усă курнăшăн пухăнакан тупăш пайĕ çултан çул ӳсет. Кăçал, сăмахран, налук мар тупăшăн кăтартăвĕ пĕлтĕрхинчен 17% пысăкрах пуласси паллă. Малашнехи тĕллев – республикăн пĕрлехи бюджечĕн тупăш пайне ӳстерме патшалăх тата муниципалитет пурлăхĕпе усă курас ĕçе йĕркеленĕ чухне пасар механизмне анлăрах кĕртсе пырасси.

Паян кашнинех хумхантаракан ыйту вăл – çĕр. Тахçан пусă çаврăнăшĕнчен кăларнă пулăхлă çĕрсемпе каллех усă курма тытăнмалла, муниципалитетсен хăйсен çĕрĕсене, çав шутра – уйрăм çынсен пайĕсене те, харпăрлăха куçарассине хăвăртлатмалла. Хуçасăр лаптăксем текех пулмалла мар, çĕрĕн кашни тăваткал метрĕпе тĕллевлĕ усă курма вĕренмелле. Çак пуянлăх республика аталанăвĕшĕн ĕçлетĕр. Çĕр пулсан – çын пурăнать, ун çинче тăрăшса вăй хурсан пурнăç та лайăхланать. Çитес виçĕ çулта çĕр лаптăкĕсене шута илессине, харпăрлăха куçарассине вĕçлеме палăртнă. Пĕтĕмлетерех каласан – Çырура çĕр ыйтăвне татса памалли координатсен çĕнĕ тытăмне палăртнă. Ăна шанăçа кĕртме тăрăшсах ĕçлĕпĕр.



**Николай ПЕТРОВ, «Вăрмарти кайăк-кĕшĕк фабрики» АУО директорĕ, Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ:** Республика çулталăка мĕнле вĕçлени çинче чарăнса тăмăп, вăл пĕтĕмпех куç умĕнче. Чăннипех нумай ĕç тунă, анчах тумалли тата та чылай. Çырура ку тĕллевсене уçăмлăн палăртнă. Патшалăх Канашĕпе ĕç тăвакан влаç килĕштерсе ĕçленипе умри тĕллевсем ăнăçлă пурнăçланаççех. Кун пирки нимĕн чухлĕ те иккĕленӳ çук.

Çырура – çĕнĕ пĕтĕмлетӳ, хальхи шухăшлав. 2014 çул валли палăртнă чикĕсем – пысăк та анлă. Вĕсене пурнăçа кĕртме пурин те пĕрле вăй хумалла. Чи малтанах хамăрăн, кашни çыннăн тăрăшарах ĕçлемелле. Вара, Чăваш Ен Пуçлăхĕ М.Игнатьев калашле, «...эпир хамăр ума амбициллĕ тĕллевсем лартса вĕсене пурнăçлама хăнăхнă. Хамăр вăя шанмалла, суйласа илнĕ çулран ниçталла та пăрăнмалла мар. Ун чухне пирĕн пурте ăнать!»

**Валентина ПЕТРОВА, Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Шетмĕри культура аталанăвĕпе вулавăш тивĕçтерĕвĕн центрĕн директорĕ, Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ:**



Умри çул ансат мар. Çавна май республикăра пурăнакансене çапла чĕнсе каланă кашни сăмахăн пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Михаил Игнатьев Пуçлăхăн Çырăвĕнче пурнăçăн нумай енлĕ ыйтăвĕсене хускатнă: экономика, тирпейлĕхпе хăтлăх, социаллă программăсем, вĕренӳ тата сывлăх сыхлавĕ тата ытти вун-вун ыйту. Михаил Васильевич тĕллевсене кăна палăртмарĕ, вĕсене пурнăçламалли çул-йĕре уçса пачĕ. Мĕнле пурăнмаллине каларĕ.

Чăваш Еншĕн паян чи çивĕччи – çынсене ĕçпе тивĕçтермелли условисем йĕркелесси. Кашниех хăйĕн пĕлĕвĕпе, ăсталăхĕпе, пултарулăхĕпе усă курса вырăнта вăй хума пултартăр. Çемйинчен уйрăлмасăр, уйăхĕ-уйăхĕпе ытти региона тухса çӳремесĕр. Тăван кĕтес, республика аталанăвне хăйĕн тӳпине хывтăр.

Тепĕр самант та килĕшрĕ: республика Пуçлăхĕ сăмахне кашни çыннăн хăйĕн ĕç вырăнĕнче тăрăшса ĕçлемелли пирки каланипе пуçларĕ, эпир лайăх ĕçлесен республика, унăн экономики сулмаклă утăмсемпе малалла каяссине çирĕплетнипе вĕçлерĕ.

**Валерий ЧАЙКИН, Тăвай район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ:**



Чăваш Ен Пуçлăхĕ яланхиллех умри йывăр, анчах пурнăçлама тивĕçлĕ тĕллевсем çинчен каларĕ. Йывăрлăхсене парăнтарса малаллах утакан кăна хăйĕн хăватне туять, тата тăрăшуллăрах, пуçаруллăрах ĕçлет. Республика та, çĕр-шыв пекех, çĕнĕ ӳсĕмсен шайне çĕкленсе, хăватланса пырать. Паллах, унччен те, халĕ те никама та çăмăл мар. Мĕн пытармалли пур, малашне те çăмăл пулмĕ. Михаил Васильевич çакна хăйĕн сăмахĕнче уçăмлă палăртрĕ. Çĕр-шыв тата республика ертӳлĕхĕсен ăслă политикине пула социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕнче эпир паян урăх тапхăра кĕтĕмĕр: ырă ĕçсен ӳсĕмлĕ тапхăрне. Малашлăх мĕнле пуласси халĕ пĕтĕмпех хамăртан килет. Çырăвăн тĕп шухăшĕ, тĕвви шăпах çакăнта. Ытти – пирĕн кулленхи пурнăçăн ĕç-хĕлĕнче.

**Иван НИКИТИН, ЧР патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр инспекцийĕн ертӳçи:** Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Патшалăх Канашне янă Çырура патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр тĕрĕслевĕпе сăнав органĕн пĕлтерĕшĕ витĕмлине палăртрĕ.



Вăл çуртсен тĕп юсав фондне йĕркелессине, нумай хваттерлĕ çуртсенче энерги ресурсĕсене перекетлеме пулăшакан приборсене вырнаçтарнине сăнассипе тата çапла тума пулăшассипе çыхăннă. Манăн шухăшпа, Михаил Васильевич нумай хваттерлĕ çуртсен канашĕсен ĕçхĕлне тĕрĕс хак пачĕ. Асăннă канаш – ахаль механизм кăна мар, вăл общественноçа хăйĕн пурлăхĕпе тĕрĕс тата тухăçлă усă курма, кашни çынра хуçа туйăмне вăратма, хăтлă пурăнма вĕрентет. Пурăнмалли çурт-йĕр Кодексĕпе килĕшӳллĕн икĕ енлĕ обязательствăсем мĕнле пурнăçланнине сănаса тăма шăпах вăл тивĕçлĕ. Кăçал пирĕн пата 5 пин ытла çын хăйне хумхантаракан ыйтупа çитрĕ. Çав ыйтусенчен чылайăшне вырăнтах, хваттерсен харпăрлăхçисен пухăвĕсенче татса пама май килнĕ. Çапах та эпир никама та хамăртан «пăрман», кашни ыйтăвăн хуравне пĕрле шыранă.

■ **Николай КОНОВАЛОВ, Юрий СТЕПАНОВ ыйтса пĕлнĕ**



# Çынсене мĕн пăшăрхантарать?

**2013 çулхи чӳк уйăхĕн 20-мĕшĕнче Пĕрлехи информаци кунĕнче граждансенчен килнĕ ыйтусен хуравĕсем**

**«Вăрнар – Упи – Красноармейски» автоçулăн «Вăрнар – Мăн Явăш» сыпăкне тĕпрен юсамалла. 2014 çулта Чăваш Республикин Транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министерстви çак çулăн 3 çухрăмне юсама пăхнă. Автоçулăн тата 14 километрне хăçан юсама палăртаççĕ?** А.Васильев, Вăрнар районĕнчи Мăн Явăш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.

**ЧР Транспорт министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – 2013 çулта бюджетран укçа уйăрнă май муниципалитет пĕлтерĕшлĕ «Вăрнар – Упи – Красноармейски» автоçулăн Красноармейски районĕнчи 3 километр тăршшĕ сыпăкне юсанă, 2014 çулта çакăн чухлех Вăрнар районĕнче юсама палăртнă.

«Вăрнар – Упи – Красноармейски» автоçула малашне тапхăрăн-тапхăрăн Чăваш Республикин Çул-йĕр фондĕнче мĕн чухлĕ укçа пулнине кура юсĕç.

**Етĕрне хулинче пăр кеременĕ тума палăртнă-и?** Т.Федорова, Етĕрне хули.

**ЧР Спорт министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Республикин 2012 çулхи раштав уйăхĕн 4-мĕшĕнчи 78-мĕш саккунĕпе 2013-2015 çулсенче республика бюджечĕн укçипе тума тата юсама палăртнă спорт объекчĕсен переченьне çирĕплетнĕ. Унта Етĕрне хулинче пăр кеременĕ тăвассине кĕртмен.

2015-2016 çулсенче объект строительствине республика бюджетĕнчен укçа уйăрмалли объектсен переченьне кĕртмешкĕн Етĕрне район администрацийĕн ЧР Экономика аталанăвĕн министерствине Инвестици политики енĕпе ĕçлекен канаша черетлĕ ларăвĕнче Етĕрне хулинче пăр кеременĕ тумашкăн республика бюджетĕнчен укçа уйăрассине пăхса тухма сĕнсе ыйтса çырмалла. Çавăн пекех Етĕрне район администрацийĕн объект строительстви валли сметăпа пăхнă хакăн 15% кая мар тата пăр кермене тытса тăма, тивĕçтерме укçа уйăрасси çинчен шантару çырăвĕ тăратмалла.

**Республикăри усал шыçăсенчен сиплекен клиника диспансерĕнчи тухтăрсем патне йышăнăва кĕме çăмăл мар. Электрон регистратура урлă çыраççĕ, черете сахалтан та уйăх çурă кĕтмелле. Диспансерта пĕр хут пулсан чирлĕ çын унта тепĕр уйăх çурăран çеç лекме пултарать. Учреждени тӳлевлĕ пулăшу ĕçĕсем пама пăрахрĕ. Чирлисене нормăпа пăхнинчен ытларах йышăнмаççĕ. Хулара тата районта пурăнакансен мĕн тумалла? Усал шыçăсенчен сиплекен диспансер специалисчĕсем патне йышăнăва мĕнле кĕмелле?** Н.Давыдова, Улатăр хули.

**ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – пациент республикăри усал шыçăсенчен сиплекен клиника диспансерĕн регистратурине номерне кăтартнă направленипе пырсан /унта «Suspicio cancer» диагноза палăртмалла/ ăна диспансер уйрăмĕн тухтăр-онкологĕсем çав кунхинех консультаци параççĕ.

Диспансерта усал шыçă диагнозне палăртнă хыççăн пациентсене малтанхи çулхине кашни 3 уйăхра тĕрĕслесе тăраççĕ, иккĕмĕш çулхине – 6 уйăхра пĕр хут, каярах – çулталăкне пĕр хутчен. Чирлĕ çынна планпа килĕшӳллĕн иккĕмĕш хут малтанах çырса /электрон регистратура урлă е регистратура сотрудникĕсем урлă телефонпа шăнкăравласа çыраççĕ/ йышăнаççĕ.

Республикăри усал шыçăсенчен сиплекен клиника диспансерĕн онколог-маммологĕ хаксен прейскуранчĕпе килĕшӳллĕн тӳлевлĕ консультаци пулăшăвĕсем парать.

**Шкулсенче ĕçпе тивĕçтерекен службăпа килĕшӳ туса шкул бригадисем йĕркелеççĕ. Пĕр ача тĕлĕшпе 11 страница тĕрлĕ документ çырмалла. Ку ĕçшĕн социаллă педагогсене тӳлемеççĕ. Тӳлев енĕпе ыйтăва татса пама пулать-и?** Шупашкар хулинчи Мускав районĕн социаллă педагогĕсем.

**ЧР Вĕренӳ министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – РФ Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин хушăвĕпе килĕшӳллĕн вĕренекенсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе ĕçсене пурнăçласси социаллă педагогăн должноç тивĕçĕсен шутне кĕрет. Çапла вара çул çитменнисене ĕçе вырнаçтарас енĕпе документсем çырса хатĕрленĕшĕн социаллă педагогсене хушса тӳлеме палăртман.

**Районти вĕренӳ учрежденийĕсем валли хушма автобуссем уйăрма пăхнă-и?** Т.Майорова, Муркаш районĕ, Шомик ялĕ.

**ЧР Вĕренӳ министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – 2013 çулта республика бюджечĕн шучĕпе /федераци бюджетĕнчен уйăрнă субсидипе/ шкулсем валли 58,8 млн тенкĕлĕх 44 автобус уйăрнă. Муркаш районне 2 автобус панă.

2013 çулта вĕренӳ учрежденийĕсем валли хушма автобуссем уйăрма палăртман. 2014 çулта шкул автобусĕсен паркне çĕнетмелли ĕçсене пăхса хăварнă. Транспорт хатĕрĕсене муниципалитетсем панă заявкăсене кура валеçĕç. Заявкăсене 2014 çулхи кăрлач-нарăс уйăхĕсенче йышăнаççĕ.

ЧР Вĕренӳ министерстви 2014 çулта шкул автобусĕ уйăрмашкăн Муркаш район администрацине заявка пама сĕнет.

**Тасалăхпа тирпейлĕхе тивĕçтерес тĕллевпе республикăри çулсем çинче автобус чарăнăвĕсемпе юнашар çӳп-çап тăкмалли контейнерсем вырнаçтармалла, çывăхрах туалетсем пулмалла. Пăрачкав районĕнче вĕсем çук. Ку енĕпе малашне ĕçлĕç-и?** А.Барыкин, Пăрачкав сали.

**ЧР Çут çанталăк ресурсĕсемпе экологи министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – автоçул çывăхĕнчи вырăна тытса тăрассишĕн, çав шутра унăн территорийĕнчен çӳп-çапа илсе тухассишĕн автоçул хуçи яваплă.

**ЧР Транспорт министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – Автомобиль çулĕсене юсамалли тата тытса тăмалли ĕçсен классификацийĕпе автобус чарăнăвĕсенче туалетсем вырнаçтарасси автоçулсене тĕпрен юсамалли ĕçсен шутне кĕрет, ку тĕлĕшпе проектпа смета докуменчĕсем хатĕрлемелле. Çавна май çак сĕнĕве 2015 çула тата ун хыççăнхи тапхăра çул-йĕр ĕçĕсен программине хатĕрленĕ чухне проектпа смета докуменчĕсем йĕркелесен республика бюджечĕн майĕсене кура пăхса тухĕç.

Регион тата муниципалитет пĕлтерĕшлĕ автоçулсем çинче автобус чарăнăвĕсемпе автопавильонсене таса та тирпейлĕ тытса тăрас тĕллевпе çӳп-çап тăкмалли урнăсем вырнаçтарнă. Подряд организацийĕсем урнăсенчи çӳп-çапа турттарсах тăраççĕ. Пăрачкав районĕнче республика автоçулĕсен çывăхĕнчи çӳп-çап тăкмалли урнăсем вырăнне çывăх вăхăтра контейнерсем лартма палăртман.

**«Волжанка» тата «Солнечный берег» санаторипе курорт комплексĕсене 2015 çулта Шупашкарта иртекен Европа чемпионачĕн спортсменĕсене тивĕçтерекен хăна çурчĕсен списокне кĕртнĕ-и?** А.Прохоров, Шупашкар хули.

**ЧР Спорт министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – 2015 çулта Европăн çăмăл атлетика енĕпе иртекен чемпионачĕн спортсменĕсене тивĕçтерекен хăна çурчĕсен списокне «Волжанка» санаторипе курорт комплексне кĕртнĕ.

**Чăваш Республикин Конституцине йышăннă куна мĕншĕн ха наци уявĕ тесе пĕлтермен? Çав вăхăтрах кӳршĕ регионта – Тутарстанра – çак кун канаççĕ, ăна наци уявĕ тесе пĕлтернĕ.** Г.Купкенова, Элĕкри И.Я.Яковлев ячĕллĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул вĕрентекенĕ.

**ЧР Юстици министерстви** пĕлтернĕ тăрăх – Чăваш Республикин патшалăх влаçĕн органĕсен полномочийĕсем ЧР Конституцийĕпе саккунĕсем çинче никĕсленеççĕ. Чăваш Республикин Конституцине йышăннă куна наци уявĕ тесе палăртас ыйтăва татса пама тивĕçлĕ саккунпа çирĕплетни кирлĕ. Чăваш Республикин Конституцийĕн 80 статйипе килĕшӳллĕн республика саккунĕсене ЧР Патшалăх Канашĕ йышăнать, вăлах вĕсене улшăнусем, хушса çырнисем кĕртет.

## Паллă композитор ячĕпе

***Трак енсемшĕн кăçалхи çул паллă ентешĕн 100 çулхи юбилейĕпе палăрса юлать. Филипп Лукин композиторăн ĕç-хĕлĕпе пултарулăхĕ хор искусствине йĕркеленипе тата унăн аталанăвĕпе тачă çыхăннă.***

Филипп Миронович çамрăк чухне Чăваш патшалăх хорĕнче юрланă, каярахпа патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн илемлĕх ертӳçинче тата тĕп дирижерĕнче тăрăшнă. Халăх унăн инструмент тата театр валли çырнă хайлавĕсене кăна мар, ытти юрри-кĕввине те хапăлланă.

Красноармейски районĕнчи Алманч ял тăрăхĕнчи вулавăшсенче паллă композитора халалланă чылай мероприяти йĕркеленĕ. Шкулта вĕренекенсем «Пархатарлă пурнăç илемĕ» викторинăн ыйтăвĕсене тĕрĕс хуравлассишĕн тупăшнă, аслăрах классенче ăс пухакансем «Раççей таран чапĕ юлчĕ унăн» ӳнер сехетĕнче композитор пурнăçĕнчи пулăмсене тишкернĕ, аслăрах ӳсĕмрисем «Чатукасси çăлтăрĕ» юрă-кĕвĕ сехетне хутшăннă. Тавра пĕлӳçĕсем йĕркеленĕ «Ф.М.Лукин ачалăхĕ» курав паллă ентешĕн биографийĕнчи манăçнă самантсене аса илтернĕ. «Юрă-кĕвĕ тĕпеленĕнче» Ф.Лукин çырнă хайлавсене итлеме пулать.

**А.СТЕПНОВ.**

## Хăйĕн вăйĕпе клуба çĕнетнĕ

***Элĕк районĕнчи Тури Хурасанта пурăнакан Надежда Афанасьева ялти клуба хăйĕн укçи-тенкипе юсаса çĕнетнĕ. Культура çуртне çĕнĕ варкăш кĕртес тĕллевпе кинемей ĕнипе пăрушне сутнă, банкран кивçен илнĕ. Вату çынна ачисем те ăнланнă: ырă ĕç тума чарман. Ял халăхĕ те унпа пĕр шухăшлă пулса ĕçе кӳлĕннĕ.***

Çурт Н.Афанасьевăн аслашĕпе асламăшĕн пулнă. Унтах ашшĕ çуралса ӳснĕ. Репресси пынă çулсенче çурта вĕсенчен туртса илсе колхоза панă, клуб уçнă. Вăхăтĕнче культура çурчĕ тивĕçĕсене туллин пурнăçланă. Кунта халăх йышлă çӳренĕ, концерт-спектакль лартнă, çамрăк мăшăрсене çырăнтарнă, хĕр-упраçпа яш-кĕрĕм пĕрле пухăнса савăннă, юрланă, ташланă...

Самана улшăнсан клуб никама та кирлĕ мар пулса тăнă. Вăхăт иртнĕ май вăл юхăннă, арканнă. 14 çул хушшинче мĕн пуррине салатнă, çаратнă. Аслашшĕ-асламăшĕн çурчĕ япăхни кинемейĕн чунне самаях ыраттарнă. Çавăнпах вăл ăна юсама, йĕркене кĕртме шухăш тытнă. Çĕнелнĕ клуба халĕ çынсем хаваспах çӳреççĕ. Каçхине пухăнса калаçса лараççĕ, хаçат-журнал вулаççĕ.

**О.ПЕТРОВ.**

Госслужба занятости Чувашии

# Çывăх вăхăтрах – тивĕçлĕ сĕнӳ



Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Республикин Патшалăх Канашне янă Çырура экономика тата общество аталанăвĕн приоритетлă тĕп тĕллевĕсене палăртнă май республикăн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвне хăвăртлатма çынна хывакан инвестицисем пĕлтерĕшлĕ витĕм кӳнине уйрăммăн асăннă.

Халăха ĕçпе тивĕçтерекен тытăмăн çитĕнĕвĕсене уçăмлатнă май республика Пуçлăхĕ ялсенчи вăй питти халăх ытти региона ĕçлеме кайнипе çыхăннă çивĕч ыйту çинче чарăнса тăнă, ку енĕпе конкретлă задача кăларса тăратнă: **"Министрсен Кабинечĕн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, предприяти ертӳçисемпе бизнес-пĕрлĕхĕн ял çыннисене ĕçпе тивĕçтерес тата вĕсен шалăвĕн шайне ӳстерес енĕпе пĕрле пурнăçламалли мерăсен комплексне туса хатĕрлемелле. Чăн малтанах халăхра "арçын профессийĕ" теме хăнăхнă ĕç вырăнĕсем йĕркелеме тăрăшмалла".**

Паллах, республикăри халăха ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсем хăйсен полномочийĕсемпе килĕшӳллĕн çывăх вăхăтрах асăннă ыйтăва тĕпе хурса тивĕçлĕ сĕнӳ парĕç. Пĕр шухăшлă социаллă партнерсен вăйне пĕрлештерсе республикăра ĕç вăйĕ ытлашши тата халăх йышлă пулнине пăхмасăр ку ыйтăва татса памаллах. Ăна пурнăçлама май пуррине хамăр хутлăхри агропромышленноç комплексĕнче пысăк проектсене ăнăçлă ĕçе кĕртнĕ тĕслĕхсене Çырура илсе кăтартни те çирĕплетет. Вĕсенчен хăш-пĕрне кăна асăнатăп: "Етĕрнесĕт" çĕнĕ завод уçăлчĕ, Вăрнарти типĕтнĕ сĕт туса кăларакан заводра производствăна çĕнетсе реконструкцилерĕç, "Юрма" агрохолдинг кайăк-кĕшĕк ашне тарăннăн тирпейлекен завода хута ячĕ. Çакăн йышши предприятисенче тăрăшакансен Чăваш Ен тулашне "вăрăм укçа" шырама кайма та кирлĕ мар. Кунта ĕç тухăçлăхĕ те пысăк, шалу та тивĕçлĕ, çемье те кăмăллă.

■ **Сергей ДИМИТРИЕВ, Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳçи**

# Çамрăк хĕрарăмсене ĕçлев центрĕсем вырăн тупса параççĕ

***Раççейĕн мĕн пур регионĕнче демографи лару-тăрăвне лайăхлатма пулăшакан комплекслă мерăсене тивĕçлипе хаклаççĕ. Хĕрарăмăн социаллă пурнăçпа ĕçлев тытăмĕнчи прависене тата гарантийĕсене хӳтĕлессипе çыхăннă мелсенчен пĕрне халăха ĕçпе тивĕçтерекен служба уйрăмах пĕлтерĕшлĕ тĕллев тесе палăртать.***

Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин хăйĕн кулленхи ĕçхĕлĕнче республика шайĕнче йышăннă "çул-йĕр карттине" тĕпе хурать. Официаллă йĕркепе калас тăк унăн ячĕ – "Чăваш Республикинче 2013-2015 çулсенче хĕрарăмсене ачана воспитани парассипе çыхăннă тивĕççене пурнăçланипе пĕрлех ĕçлеме май туса парасси тата ачана виçĕ çула çитиччен пăхмашкăн отпуск илнĕ амăшĕсен професси вĕренĕвне /тепĕр специальноç хăнăхăвне/ йĕркелемешкĕн услови туса парасси".

2013 çул пуçланнăранпа ĕçлев службине вырăн тупса памашкăн ыйтса çул çитмен ачасем çитĕнтерекен 5957 хĕрарăм пынă, вĕсенчен 3783-шне е 63,5 процентне пулăшма май килнĕ.

Ĕçе вырнаçтарассин эффективлăхне хăпартас тĕллевпе кăçал хĕрарăмсем /çав шутра çул çитмен ачаллисем/ валли вакансисен 9 ярмăркине пухнă.

Çул çитмен ачаллă хĕрарăмсен тупăшма пултараслăхне ӳстерес тĕллевпе Чăваш Республикин 2012-2020 çулсем валли йышăннă "Халăха ĕçлевпе тивĕçтересси" патшалăх программипе килĕшӳллĕн ачана виçĕ çула çитиччен пăхмашкăн илнĕ отпускри амăшĕсенчен 350-шĕнчен кая мар çуллен профессие вĕренмешкĕн каймалла. Пулăшăвăн асăннă мелĕпе усă курас текен йышлă пулнă май ку кăтартăва кăçал 400 çынна çитерме тивнĕ.

Хальхи вăхăтра профессие вĕренмешкĕн тата ку енĕпе хушма пĕлӳ илмешкĕн виçĕ çула çитмен ачаллă 426 хĕрарăма /иртнĕ çулхи çав вăхăтра – 381/ янă. Вĕсенчен 44-шĕ ачана пăхмашкăн илнĕ отпускра ларнă, 382-шĕ ĕç хутшăнăвĕнче шутланмасăрах виçĕ çул тултарман ачисене пăхнă. Çавăн пекех виçĕ çула çитмен ача пур 128 ĕççĕр хĕрарăма вĕренме май туса панă.

Вĕсене 27 профессипе – бухгалтер /квалификацие ӳстересси тата тепĕр ăсталăха хăнăхтарасси/, водитель, дизайнер, маникюрша, маляр, заправка станцийĕн операторĕ, сутуçă-кассир, çĕвĕç, кадр пайĕн инспекторĕ тата ытти те – хăнăху илме пулăшаççĕ. Вĕсене конкурс мелĕпе суйласа илнĕ 16 вĕренӳ организацийĕ йышăнать. Професси илнĕ хыççăн хĕрарăмсене пурне те вырнаçтарнă.

Харпăр хăй ĕçне йĕркелес тĕллевлĕ инвалидсем, нумай ачаллă ашшĕ-амăшĕ, сусăр ача çитĕнтерекенсем тата виçĕ çула çитмен ача пур хĕрарăмсем саккунпа килĕшӳллĕн финанс пулăшăвне малашрах тивĕçмелли ирĕкпе усă кураççĕ. Çапла майпа 2013 çулта çул çитмен ачаллă 27 амăшĕ ĕçлев центрĕсенчен субсиди илнĕ.

Çавăн пекех кăçалхи кăрлач-чӳк уйăхĕсенче нумай ачаллă тата сусăр ачаллă ашшĕ-амăшĕнчен /çав шутра ачисене воспитани панипе пĕрлех ĕçлес текен хĕрарăмсенчен/ 50-шне ĕçе вырнаçтармашкăн килĕшӳсем çирĕплетнĕ. Çапла майпа сусăр ачаллă 6 тата нумай ачаллă 44 ашшĕ-амăшне йышăннă. Вĕсем пурте ĕçĕн уйрăм йĕркиллĕ – тулли мар эрнеллĕ – вакансисене тивĕçнĕ.

Виçĕ çула çитмен ачаллă хĕрарăмсен професси вĕренĕвне йĕркелемешкĕн бюджет кăçал 4986,3 пин тенкĕ уйăрнă, ачисене воспитани панипе пĕр вăхăтрах ĕçлекенсене условисемпе тивĕçтерме – 1500 пин. Çитес çул асăннă кăтартусем 5563,7 пин тата 1500 пин тенкĕпе танлашмалла.

**Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службы.**

Коррупци

# «Криминаллă çул-йĕрсем» тимлĕхсĕр юлмĕç

***Професси вĕрентĕвĕн заведенийĕсенче пĕлӳ пухакан çамрăксен, студентсен 22% кулленхи пурнăçра коррупцие тĕл пулнă. Çак цифрăна тунти кун ЧР Пуçлăхĕ çумĕнчи коррупципе кĕрешекен координаци канашĕн ларăвĕнче вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов пĕлтерчĕ.***

Ку – вĕренекен çамрăксен хушшинче ирттернĕ анлă ыйтăм кăтартăвĕ. Яшсемпе хĕрсем коррупци саманчĕсем вĕренме кĕнĕ, экзамен-зачет тытнă чух уйрăмах нумаййине палăртнă. Унсăр пуçне вĕренӳ заведенийĕсенче дипломсемпе курс ĕçĕсене те сутаççĕ, преподавательсем çамрăксене ирĕксĕрлесе репетитор патне çӳретереççĕ – паллах, укçалла, ачасене садике вырнаçтарнă чух вăрттăн тӳлеме тивет, стипенди е общежити илессишĕн те тăкакланмалла... Ыйтăм кăтартăвĕсемпе паллаштарнă май министр вĕсемпе ĕçре усă курасси çинчен каларĕ. Ыйтăма явăçтарнисен 38% коррупци тĕслĕхĕсем çинчен каласа пама хатĕррине палăртнă та – право хуралĕн органĕсемшĕн «сухаламалли ана» пысăкки куç кĕрет.

Патшалăх тата муниципалитет нушисем валли тĕрлĕ тавар туянассипе, пулăшу ĕçĕсем пурнăçлассипе çыхăннă саккассене вырнаçтарнин саккунлăхĕ те нумай чухне ыйтусем çуратать. Республика прокурорĕ Владимир Метелин палăртнă тăрăх – ку сфера коррупционерсемшĕн питех те илĕртӳллĕ. Пĕр кунлăх фирмăсем йĕркелесе улталанă тĕслĕх чылай. Тĕп хулара, сăмахран, йывăçтĕм лартма, тавралăха тирпейлеме пĕр фирмăпа килĕшӳ тунă та – 9 млн тенкĕ ытла куçарса панă. Ĕçе пурнăçламан. Ку тĕслĕхе халь полици тĕпчет. Çав вăхăтрах саккас паракансем хăйсем те килĕшĕве туллин пурнăçланине тĕплĕ тĕрĕслемеççĕ, ĕçе вăхăтра пурнăçламасан хайхи фирмăсенчен укçана каялла шыраса илес енĕпе çине тăмаççĕ.

Следстви комитечĕн вырăнти управленийĕн ертӳçи Александр Мигушов ултавлă темиçе тĕслĕх çинче пайăррăн чарăнса тăчĕ: Элĕк районĕнчи Шĕмшеш ял тăрăхĕн пуçлăхне, Çĕмĕрле администрацийĕн икĕ сотрудникне, Муркаш районĕнчи Шомикри психоневрологи директорне суд умне тăратнă.

Экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин патшалăх саккасĕсене пурнăçлассине тăсса янă компанисене ятран асăнчĕ: «Элитстрой», «Степ», «Стройкомплект»... Аукционсене электрон суту-илĕвĕн мелĕпе ирттерни коррупци тĕслĕхĕсенчен хăтăлма май парать-ха, анчах хайхи пĕр кунлăх фирмăсем кунта та мелне тупаççĕ. Малтанах аванс тӳлекен тĕслĕхсенче суту-илĕве хутшăнма тăрăшаççĕ. Авансне илеççĕ те – кайран шыра вара вĕсене.

Саккас паракансем хăйсем чееленнĕ тĕслĕхсем те пулаççĕ. Монополипе кĕрешекен службăн Чăваш Енри управленийĕн ертӳçи Вячеслав Борисов, сăмахран, çакнашкал тĕслĕхсене асăнчĕ: çунтармалли-сĕрмелли материалсем туянмалла, çакна «уйрăм характеристикăллă çунакан шĕвексем» тесе палăртаççĕ. Е – сăрă, вăл та темле «çăра шĕвек». Çакă, паллах, суту-илĕве хутшăнма пултаракансен шутне чакарма, саккаса «хамăр пĕлекеннисене» пама кирлĕ.

Республикăн кăçалхи инвестици проекчĕн объекчĕсен строительствин патшалăх контракчĕсем мĕнлерех пурнăçланнине тĕплĕ тишкерчĕç. Строймин ертӳçи Олег Марков пĕлтернĕ тăрăх – хальхи вăхăтра 85 объектра строительство ĕçĕсем пыраççĕ. Графикран юлса пыраканнисем те çук мар. «Стройкомплект» Йĕпреç районĕнчи Буинскри ача садне тăвассине тăсса янă. Муркашра лицее вăхăтра хута яман, Кӳкеçре ача садне ниепле те туса пĕтереймеççĕ – «Парнас» компани айăплă. Сăмах май, çав фирма ячĕ ларура темиçе те янăрарĕ – чылай çĕрте кăмăлсăр йĕр хăварма ĕлкĕрнĕ пулас. Çĕрпӳре «Чăвашавтодор» тасатакан сооруженисен строительствине такăнтарнă. Çĕнĕ урамсене электрификацилес енĕпе çитменлĕхсем пур. Республикăн кăнтăр енчи районĕсене ĕçмелли шывпа тивĕçтермелли объект тĕлĕшпе йывăрлăхсем çук мар. Çакă проектра маларах палăртман ĕçсене пурнăçлама тивнипе те сăлтавланнă.

Вице-премьер – ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов, ларăва ертсе пынăскер, хăшĕсем тӳрре тухас тенине йышăнмарĕ: «Саккас паракансем хăйсем те яваплăха туллин туймаççĕ. Ĕçсене малтанах мĕнле пурнăçлама тытăннине тĕрĕслемеççĕ. Кайран вара хыпăнса ӳкме тивет. Укçа куçарнă, ĕçне туман. Дирижер çук!» Унăн шухăшĕпе, строительство сфери – «чи криминаллă çул-йĕр». Эппин, ку енĕпе пушшех пысăк тимлĕх кирлĕ. Çавна май асăннă тема координаци канашĕн çитес çулхи ĕçĕнче те тĕп вырăнта пулĕ – канашăн 2014 çулхи ĕç планне ларура çирĕплетрĕç.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

Ĕçлев

# «Специалистсен яваплăхĕ, ăсталăхĕ пысăк...»

***Çĕрпӳ районĕнчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр коллективĕ кăçалхи тĕллевсене ăнăçлă пурнăçласси иккĕлентермест. Çакна вун пĕр уйăхри кăтартусем аван çирĕплетеççĕ. Асăннă тапхăрта ĕçсĕр 1201 çынна регистрациленĕ, çав шутра предприяти-организацие хупнипе е штата пĕчĕклетнипе кăларса янисем, е хăйсен ирĕкĕпе, е икĕ енлĕ килĕшсе татăлнипе кайнисем – 67-ĕн. Центра пулăшу ыйтма пынисен хушшинче хĕрарăмсем /56,8 процент/ тата 16-29 çулсенчи çамрăксем /35,47 процент/ йышлă. Пĕрремĕшĕсем иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен – 8,79, иккĕмĕшĕсем 2,62 процент нумайланнă.***

***2013 çулхи раштавăн 1-мĕшĕ тĕлне центрта 67 çын учетра тăнă /пĕлтĕрхи çав вăхăтра –77/, вĕсенчен 5-шĕ – инвалид. Шута илнĕ ĕçсĕрлĕх шайĕ вăй питти халăх йышĕпе шайлаштарсан 0,30 процент пулнă, 2012 çулхи раштавăн 1-мĕшĕ тĕлне – 0,34.***

***Ĕç вăйĕн кирлĕлĕхне тата ăна сĕннине илес тĕк чӳк уйăхĕн вĕçĕнче вакансисен банкĕнче 176 вырăн пуррине пĕлтернĕ. Вĕсен 72,86 процентĕ рабочи профессийĕпе çыхăннă. 13,63 процентĕ – промышленноçпа строительство, 18,75-шĕ – ял хуçалăх предприятийĕсенчен, 43,75-шĕ – ытти отрасльтен.***

***Служба органĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паянхи кăларăмра унăн ертӳçи Валерий Александрович ПАТШИН паллаштарать.***



*● Центр ертӳçи Валерий Александрович Патшин.*

**– Валерий Александрович, Чăваш Республикин 2013 çулта халăха ĕçлĕ тумалли тĕллевлĕ программине Çĕрпӳсем еплерех пурнăçлаççĕ?**

– Ку программăн мероприятийĕсемпе килĕшӳллĕн пирĕн специалистсем кăçалхи 11 уйăхра 1051 çынна тупăшлă вырăн тупса панă. Çак кăтарту çулталăкри заданин 100,86 процентĕпе танлашать. Центрта учетран кăларнă граждансен пĕтĕм йышĕнчен ĕçпе тивĕçтернисен танлаштарулла виçи 87,80 пулнă.

Программăн уйрăм мероприятийĕсене илес тĕк общество ĕçĕсене кăçал граждансене ямашкăн хуçалăхсемпе 34 килĕшӳ çирĕплетнĕ. Вĕсем тăрăх 138 çынна /116-шĕ ĕçсĕр шутланнă/ вырнаçтарнă.

14-18 çулсенчи çамрăксене вĕренӳрен пушă тапхăрта ĕç тупса парас тĕллевпе 490 вăхăтлăх вырăн йĕркелемешкĕн 19 килĕшӳ тунă. Вырнаçмашкăн уйрăмах кансĕр 8 çынна – 3 инвалида тата тивĕçлĕ кану ӳсĕмне çывхаракан 5 ĕçсĕре /пенсие тухиччен 2 çул юлнисене/ – ĕç тупса панă. Професси училищи е ятарлă вăтам пĕлӳ паракан заведени пĕтернĕ 18-20 çулсенчи 6 хĕрпе качча стажировкăна, сезонлăх тата яланлăх ĕçлеме республика тулашне оргнабор мелĕпе 50 çынна янă.

Ĕçлев органĕсен пуçарулла политикин пĕлтерĕшлĕ аспекчĕсенчен пĕри – центртан пулăшу кĕтекен граждансене тата ĕçсĕрсене пĕчĕк бизнес йĕркелемешкĕн хавхалантарасси. Кăçалхи вун пĕр уйăхра предпринимательлĕх йĕркелессипе çыхăннă консультацие 22-ĕн илнĕ, «Харпăр хăй ĕçне мĕнле пуçăнмалла» семинара» 20-ĕн çӳренĕ. Çапла 4 çын ĕçсĕрлĕх статусне предпринимателĕннипе ылмаштарчĕ, 58,8-шар пин тенкĕ субсидие тивĕçрĕ.

**– Кăçал сирĕн служба тепĕр çĕнĕлĕхе пурнăçлама пикенчĕ терĕр. Мĕнпе çыхăннă асăннă ен? Ĕçе тухас тĕллевлĕ çамрăк амăшĕсене ăсталăха ӳстерме пулăшатăр-и?**

– Асăннă çĕнĕлĕхе илес тĕк – вăл пенсионерсене хăйсем килĕштерекен профессипе пĕлӳ илме май туса парассипе çыхăннă. Кăçал ун пеккисем пулмарĕç-ха. Çитес çул вара 3 пенсионера вĕрентсе кăлармалла.

Центр сĕннипе ĕç рынокĕ ыйтакан профессие вĕренме, тепĕр специальноçа хăнăхма, квалификацие ӳстерме çулталăк пуçланнăранпа 41 çынна тата ачана 3 çула çитиччен пăхмашкăн отпуск илнĕ 14 хĕрарăма янă. Вĕсен шутĕнче ĕç хутшăнăвĕсенче тăракан та пур.

Професси ориентацине 1519-ăн тивĕçнĕ, тĕрлĕ тренинга хутшăнса психологи хӳтлĕхне – 52-ĕн, социаллă адаптацие 35-ĕн илнĕ.

Ваканси ярмăркkин уссин пĕлтерĕшне туйса илтĕмĕр. Ăна ирттерни ĕç рынокĕнчи кăткăслăха сирмешкĕн тата предприяти-организаци валли кирлĕ кадр суйласа илмешкĕн пулăшать. Кăçал асăннă мероприятие 10 хут пухнă. Унта тивĕçлĕ кану ӳсĕмне çывхаракансене, профессин пуçламăш, вăтам тата аслă пĕлĕвĕ илнисене, ĕçрен кăларса ярас хăрушлăх пуррисене йыхравлатпăр. Ярмăрккасене 18 организаци хутшăнчĕ, 140 ваканси сĕнчĕ. Вĕсене çитсе курнă 284 çынран 16-шĕ ĕç тупнă.

**– Чăваш Республикинче инвалидсем валли ĕç вырăнĕ квотăлассипе çыхăннă саккун Çĕрпӳ тăрăхĕнче мĕнле пурнăçланать?**

– Ку саккуна районти предприяти-организаци пăхăннипе интересленсех тăратпăр. Çавна май сусăрсене ĕçе илекенсем те сахал мар. Кăçал вĕсене «Мой дом», «Альянс-комфорт» ОООсенче, райпора, Емельянов предприниматель патĕнче йышăнчĕç. Ĕç вырăнне инвалидсемшĕн юрăхлă майлаштарнипе çыхăннă тăкаксене саплаштарма 268 пин тенкĕ куçарнă.

Район халăхне ĕçпе тивĕçтермелли полномочисене пурнăçламашкăн кăçал 7 млн тенкĕ тăкакламалла, çав шутра Чăваш Республикин 2012-2013 çулсенчи «Халăх ĕçлевне пулăшасси» программин мероприятийĕсем валли – 328 пин.

Çапла вара кăçал пирĕн 1042 çынна ĕçлĕ тумалла, профессии ориентацийĕ тата психологи хӳтлĕхĕ 732 граждана памалла, рынок ыйтакан профессисене вĕрентмешкĕн 33 ĕçсĕре, ачана 3 çула çитиччен пăхмашкăн илнĕ отпускри 13 хĕрарăма ямалла.

**– Çул çитмен çамрăксене вăхăтлăх вырнаçтарнине асăнтăр-ха. Тен, кун пирки тĕплĕнрех каласа паратăр?**

– Ведомствăн тĕллевлĕ программи тăрăх районта кăçал çул çитмен 490 çамрăка вăхăтлăх вырнаçтармалла. Ку енĕпе умри тĕллевсене пурнăçланă ĕнтĕ. Ĕçлев центрĕ ачасемпе, ашшĕ-амăшĕпе çул çитменнисене хутшăнтаракан вăхăтлăх ĕçсене йĕркелесси, вĕсем мĕнлерех пуласси пирки тăтăшах калаçу ирттерет. Кун çинчен сайтра, центрăн ятарлă стендĕнче, массăллă информаци хатĕрĕсенче вуласа пĕлме пулать.

Çул çитменнисене ятарлă хатĕрленӳ кирлĕ мар вырăнсене йышăнаççĕ.

Йывăр условисенче çитĕнекенсене тата теветкеллĕх ушкăнĕнчисене – тăлăхсене, çывăх çыннисен хӳттисĕр юлнисене, ĕçсĕр граждансен ывăлхĕрне, тăнăçсăр тата йышлă çемьесенче ӳсекенсене, çул çитменнисемпе ĕçлекен комиссисенче учетра тăракансене – чи малтанах вăхăтлăх вырнаçмашкăн май туса паратпăр. Ачасем кăçал районти 14 хуçалăхра вăй хучĕç: уй-хир ĕçĕсене, кулленхи юсава хутшăнчĕç, ялсене тирпейилем кĕртрĕç тата ытти те.

Чăн та, юлашки вăхăтра 14-18 çулсенчи çамрăксене вырнаçтарма йывăрлансах пырать – предприяти ертӳçисем вĕсене йышăнма тăхтаса тăраççĕ, мĕншĕн тесен кун пек чухне ĕç сыхлавĕн йĕркине, ĕçлев саккунне çирĕп пăхăнмалла, чи пĕчĕк шалуран кая мар тӳлемелле, çаксемпе район прокуратури интересленсех тăрать.

**– Халăха ĕçлĕ тăвассипе çыхăннă программа мероприятийĕсем ăнăçлăн пурнăçланаççĕ апла...**

– Паллах. Умри тĕллевсене çĕнсе илмешкĕн пултармаллах, мĕншĕн тесен специалистсем маттур пирĕн, вĕсен ăсталăхĕ, яваплăхĕ пысăк, пултарулăхĕ иксĕлми. Партнерсем те шанчăклă. Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин ертӳлĕхĕ те пулăшсах тăрать.

■ **Валентина СМИРНОВА калаçнă**

# Йывăр вăхăтра пулăшаççĕ, шанчăк парнелеççĕ

***Сусăрсене ĕçпе тивĕçтерме тăрăшни – цивилизаци шайĕн тĕп кăтартăвĕсенчен пĕри. Пирĕн республикăра та инвалидсене пулăшасси ЧР Правительствипе ĕçлев службин органĕсен приоритетлă тĕллевĕ пулса тăрать. Ку енĕпе Елчĕк районĕнчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр та çине тăрса ĕçлет.***

### Кашни сусăрпа – уйрăммăн

«Сусăрсене кăткăс лару-тăрура адаптациленме пулăшасси, вĕсене квалификацине ӳстерме е çĕнĕ професси алла илме май туса тата ĕç тупса парасси – пирĕн тĕп тĕллевсенчен пĕри», – палăртать центр директорĕ Марина Васильева, районти депутатсен Пухăвĕн депутачĕ. Кăçал ку учреждение ĕç шыраса сывлăх тĕлĕшĕнчен хавшакрах 30 çын килнĕ. Унти специалистсем кашни инвалидпа уйрăммăн ĕçлеççĕ: ĕç шырамалли мелсем пирки каласа кăтартаççĕ, ĕçлев рынокĕнчи лару-тăрупа паллаштараççĕ, хăйсен бизнесне уçма май пуррине ăнлантараççĕ, семинарсем тата ытти мероприяти ирттереççĕ, вăхăтлăх е яланлăх ĕçпе тивĕçтереççĕ. Ку ушкăнри çынсем валли вакансисене реабилитаци уйрăм программипе килĕшӳллĕн суйлаççĕ, хевтесĕрскерсен ĕç калăпăшĕ ыттисенчен пĕчĕкрех пулмаллине шута илеççĕ. Кăçал центр 22 сусăра ĕçе вырнаçтарнă, çав шутран пĕрне – республика тулашне. 1 çынна професси вĕренĕвне янă, теприне вăхăтран маларах пенси пама пуçланă, 11-ĕн профориентаци пулăшăвĕ илнĕ. Раштав уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне 6 инвалид ĕçсĕррисен шутĕнче тăнă.

Кăçал инвалидсем валли республикăн тĕллевлĕ программипе килĕшӳллĕн Т.В.Николаева, В.Ф.Петров, Л.П.Александрова предпринимательсем патĕнче «учетчик», «хуралçă», «çĕвĕç» профессисемпе ятарлă 3 ĕç вырăнĕ хатĕрленĕ. Вĕсем хăйсем патне пĕрер çынна илнĕ, виççĕшĕ те паян та ĕçлеççĕ. Сусăрсем валли ятарлă хатĕрсемпе пуянлатнă ĕç вырăнĕ йĕркеленĕшĕн предпринимательсене Чăваш Республикин бюджетĕнчен укçа уйăрса панă. Саккунпа килĕшӳллĕн – предприяти-организаци III ушкăн инваличĕ валли пĕр ĕç вырăнĕ хатĕрлемешкĕн 67,1 пин тенкĕрен ытла мар, II тата I ушкăнри валли 75 пин тенкĕрен кая мар пĕтерсен вĕсен тăкакĕсене саплаштараççĕ. Акă Людмила Александрова предприниматель çĕвĕç кирлĕрен центра пынă. Специалистсемпе канашланă хыççăн вăл хăлхи япăхрах илтекен Светлана Анисимовăна ĕçе илме палăртнă, ун валли çĕвĕ машини, ятарлă пукан тата ытти хатĕр туяннă. Юпа уйăхĕн вĕçĕнче вырнаçнă хĕрарăм çĕвĕ ĕçĕн вăрттăнлăхĕсене хăнăхса пыни савăнтарать Людмила Петровнăна. Кунти условисемпе Светлана Николаевна та кăмăллă. Ĕçе кашни ир хавхаланullă туйăмпа килнине пытармарĕ вăл.

Унсăр пуçне Г.П.Леонтьева предприниматель патĕнче нумай ачаллă ашшĕ-амăшĕ валли «çĕвĕç» профессийĕпе 2 ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ. Çапла вара республикăн сусăрсене, инвалид ачасемлĕ, йышлă ача çитĕнтерекен ашшĕ-амăшне ĕçпе тивĕçтерес тĕлĕшпе 2013 çул валли йышăннă тĕллевлĕ программăна кăçал туллин пурнăçланă центрта вăй хуракансем: унта хутшăнакансен шучĕпе те, уйăрнă укçа-тенкĕпе усă курни енĕпе те.



*● Центр директорĕ Марина Васильева.*

2013 çулта центр инвалидсене вăхăтлăх ĕçпе тивĕçтерес тĕллевпе В.Н.Шипцов хресчен /фермер/ хуçалăхĕпе, Г.Н.Никитин предпринимательпе, Аслă Елчĕк ял тăрăхĕн администрацийĕпе тата ыттисемпе 6 килĕшӳ /30 пин тенкĕлĕх/ тунă, вăхăтлăх 8 ĕç вырăнĕ йĕркеленĕ. Раштав уйăхĕн 3-мĕшĕнче ку учрежденире асăннă ушкăнри çынсем валли «Çĕнетӳ» ятпа пĕрлехи информаци кунĕ иртнĕ. Унта районти ĕç рынокĕнчи лару-тăру, паянхи кун кирлĕ профессисем, предприяти-организаци ертӳçисем хăйсем патне вырнаçас текенсенчен мĕн кĕтни, ĕç шырамалли меслетсем пирки каласа кăтартнă. Çак мероприятирех инвалидсене ĕçе вырнаçтармалли программăсемпе паллаштарнă, вĕсене валли квота уйăракан организацисем çинчен сăмах пуçарнă. Информаци кунне 5 сусăр хутшăннă.

### Квота пирки – тĕплĕнрех

Сусăрсене ĕçе вырнаçтарас тенĕ чухне специалистсем «Чăваш Республикинче инвалидсем валли ĕç вырăнĕсем квотăласси çинчен» саккунне тĕпе хураççĕ. Центр çак саккуна пурнăçламалли пирки ăнлантару ирттерет, ку енĕпе предприяти-организаци ертӳçисемпе, халăха социаллă хӳтлĕхпе тивĕçтерекен уйрăмпа, кадр службисен специалисчĕсемпе çыхăну тытать. Квота пирки калас тăк – Чăваш Республикинче 100 çынран иртекен коллективлă предприятисенче /вĕсен йĕркелӳпе право тата харпăрлăх формисене пăхмасăр/ ĕçченсен вăтам списокĕн 2 процентне инвалидсем валли уйăрмалла. Çакăн пек йышлă организаци Елчĕк районĕнче хальхи вăхăтра 4: «Прогресс» АХО, «Комбайн» ЯХПК, район тĕп больници, почтамт. Вĕсем пурте сусăрсене ĕçе илмелли квотăна пурнăçлани çинчен центра уйăхсерен информаци параççĕ. Раштав уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне çак организацисенче квотăланă ĕç вырăнĕ 17 пулнă, вĕсенче 16 сусăр вăй хунă.

Кăçал чӳк уйăхĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Республикин «Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче инвалидсем валли ĕç вырăнĕсем квотăласси çинчен» саккунĕн 2 тата 4 статйисене улшăнусем кĕртесси çинчен» саккунне алă пуснă. Унта 35 çынран сахал мар тата 100-тен ытлашши мар коллективлă ĕç паракансемшĕн списокри вăтам йышăн 1,5 процентлă виçипе квота йышăнмаллине палăртнă. «Çакнашкал йышлă организаци пирĕн районта пĕтĕмпе 18. Вĕсен ертӳçисемпе эпир çак кунсенче канашлу ирттеретпĕр, ĕç паракансене çĕнĕлĕхсемпе паллаштаратпăр, ытти самант пирки ăнлантаратпăр», – терĕç центр специалисчĕсем. Çапла вара тата ытларах сусăра ĕçпе тивĕçтерме май килĕ. Паллах, яланхи ĕç вырăнĕ пур чухне сывлăхĕ хавшакрах çын та хăйне ыттисемпе танах туять, тивĕçĕсене тăрăшса пурнăçлать.

### Чĕререн тав тăвакан нумай

Центр специалисчĕсем инвалидсем çеç мар, ĕçсĕр ытти çын та хăйне телейлĕ туйтăр тесе тăрăшаççĕ. Акă 2013 çулхи кăрлач-чӳк уйăхĕсенче учреждение 1072 çын пулăшу ыйтма килнĕ. Раштав уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне ĕçсĕррисен шутĕнче 47-ĕн тăнă. Кăçал 11 уйăхра центр пулăшăвĕпе 975 çын /килнисен 91%/ ĕçе вырнаçнă. Общество ĕçĕсене 258 гражданина явăçтарнă, çав шутран 66,7% – хĕрарăмсем, 3,9% – 16-29 çулсенчи çамрăксем. Çул çитмен 461 çамрăка вĕренӳрен пушă тапхăрта вăхăтлăх ĕç тупса панă. 4 çын хăйĕн ĕçне пуçарса ямашкăн 58800 тенкĕ субсиди илнĕ. 16 гражданина професси вĕренĕвне янă. Ачине 3 çула çитиччен пăхмашкăн отпуск илнĕ 9 хĕрарăма çĕнĕ профессие хăнăхтарнă тата ăсталăхне ӳстерме май туса панă. 20-ĕн социаллă адаптаци, 51-ĕн психологи енĕпе патшалăх пулăшăвĕпе усă курнă. 2013 çулхи 11 уйăхра вакансисен 9 ярмăркkине ирттернĕ, вĕсенче 157 çын ĕç тупма пултарнă.

Елчĕк районĕнчи халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр ĕçлевпе çыхăннă ыйтусемпе пурне те пулăшма хатĕр. Ахальтен мар учреждени специалисчĕсене çынсем йывăр вăхăтра хăйсене пăрахманшăн, çĕнĕ шанчăк парнеленĕшĕн чĕререн тав тăваççĕ.



*● С.Анисимова ĕç вырăнĕпе кăмăллă.*

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

# Тĕп ыйту – чăваш сăмахĕсен пĕлтерĕшĕ

***Хусанта "Атăлçи тата Урал тăрăхĕсенчи халăхсен историллĕ шăпи /XVI – XVIII ĕмĕр пуçламăшĕ/" ятпа Пĕтĕм Раççейри конференци иртнĕ. Унта Тутарстан, Чăваш Ен, Мускав, Челябинск, Тобольск, Эрĕнпур, Волгоград тĕпчевçисем хутшăннă.***

Канашлăва Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн тĕп наука сотрудникĕ, этнологипе социологи пайĕн пуçлăхĕ Виталий Иванов ертсе пынă. "Çавра сĕтелте" сӳтсе явнă тĕп ыйтусенчен пĕри – "XVI – XVIII ĕмĕрсенчи çырулăх çăл куçĕсенче тĕл пулакан "чюваш" тата "ясачная чюваша" сăмахсен этникăпа социаллă пурнăçри пĕлтерĕшĕсем". Филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Николай Егоров доклад тунă. Тутарстан тĕпчевçисем, Хусанта пурăнакан чăвашсем ыйтăва сӳтсе явма хастар хутшăннă.

**И.СЕРГЕЕВА.**

Этем тата çут çанталăк

# Вĕç-вĕç, чакак – шур аяк!

Çуллахи кун хĕвеллĕ, ăшă. Тĕрлемесрен Туканаша çуранах таврăнатăп. Муркар çывăхĕнче Шартшуртна çырми урлă каçса хутăш вăрмана хăпарса çитрĕм те чарăнса тăтăм. Сывлăш – ытарайми! Тӳп-тӳрĕ юмансемпе ăвăссем тӳпенелле чаплăн та мухтавлăн кармашаççĕ. Ура айĕнчи курăк каçхи уçăлăха упрать. Сулахайри уçланкă ешерлĕхĕнче сар çип утипе шĕпĕн курăкĕн ылтăн çеçкисем яр уççăн палăраççĕ. Вĕсен хушшинче, сенкер тӳпен пĕчĕкçĕ татăкĕ евĕр, кăвакарчăн куçĕ тĕслĕ вероника хăйĕн çеçкине çурнă. Пĕтĕм тавралăх çутă хĕвеле мухтать: туратлă-тĕретлĕ йывăççем те, кăпăшка тĕм те, чечек-курăк та, вун-вун саслă кайăксем те, симĕс шăрчăк та.

Эпĕ илеме ытараймасăр, сукмакран пăрăнса уçланкăпа утса çеремлĕ çырма хĕрне пырса тухнă. Сасартăк ура айĕнче – чакăлтатнă сас! «Тăнăçсăрсем! Вăрттăнлăха пĕлтеретĕр, хăвăра сутатăр, – вăрçавăрçа çĕрте йăваланакан икĕ чĕп патне пытăм. – Йăви ăçтарах-ха?» Ытти чĕп сасси ăна хăвăрт тупма пулăшрĕ. Вăл çывăхри юман тăррине, юплĕ турат çинче. Пысăк йăва. Улах кĕтес: сукмак та çук, çырма хĕрри. Чакаксем турат çине турат хунă, пĕр-пĕрне явакласа тыттарнă. Типĕ курăк хушнă, тăмпа çирĕплетнĕ. Шалта вĕтĕ турат нумай, тĕпĕнче – тăпра, çулçăсем, çăм. Кĕмелли-тухмалли шăтăк тарăн, ăна та тăмпа сĕрнĕ. Тăррине çирĕп туратсем хунă. Йăва шанчăклă. Вăйлă çил тăвăл алхастăр – çаврăнса ӳкмест. Çи витти çăмартасене те, хевтесĕр чĕпсене те çумăртан çеç мар, çăткăн кайăксенчен те сыхлать.

Чакак чĕпписене йăвана хунă хыççăн аса илтĕм: тахçан, темиçе çул каялла, Тĕрлемес шкулĕнче вĕреннĕ çулсенче улах çак çырма хĕррине сахал мар чупса çӳренĕ. Кунта вун çичĕ йăваччĕ. Эпир – тăват-пилĕк арçын ача – вĕсене нихçан та тивмен, тустарман. Чакаксен пурнăçĕпе куллен кăсăкланнă. Йăвасем патне питĕ асăрханса, черетпе, пĕрерĕн-пĕрерĕн пынă. Вĕсемпе юлташлă пулнă.

Чакаксем çулталăк тăршшĕпе мăшăрлă. Вĕсен çирĕп те шанчăклă, улшăнман юрату. Нарăс уйăхĕн вĕçĕнчех вăрмана таврăнаççĕ. Çуркунне мăшăрлану вăййи пуçланать. Çав тери хитре курăнăш! Пĕрре ами çӳлелле вирхĕнет, тепре аçи сывлăша ыткăнать. Унтан пĕр-пĕрне хăвалама тытăнаççĕ. Ай турах! Веер пек сарăлнă хӳрисем пулăшнипе ытарлă пăрнăç-çаврăм, тайлăк тăваççĕ... Калама сăмах çитмест.

Ами симĕссĕн курăнакан хăмăр пăнчăллă пилĕк-çичĕ çăмарта тăвать. Вĕсене вăл пĕрремĕш çăмарта тунă хыççăн вун çичĕ кун пусса ларать. Аçи ăна тăрантарать, чакăлтатмасть, пытарăнса пурăнма тăрăшать. Пĕр-пĕр хăрушлăх сиксе тухсан амине систерет. Чĕпсем тухсан унăн ĕçĕ пушшех нумайланать. Чĕпсем тĕрекленсен ами ăна пулăшма тытăнать. Вĕсем йăвана шăши евĕрлĕ кăшлакан чĕр чун, саранча, шăна-пăван, вăрăм сăмса, нăрă çĕклеççĕ. Çапла виçĕ эрне тăсăлать. Чĕпсем йăваран вĕççе тухсан та икĕ эрне ашшĕ-амăшĕ апатлантарать. Ун хыççăн та пурте пĕрле пулма тăрăшаççĕ. Тĕрлĕ çум курăк вăрри, пĕрчĕллĕ тырă, хĕвел çаврăнăш çиеççĕ, тепĕр чухне ялсенче килти хуçалăхри кайăк-кĕшĕкпе пĕрле сăхкалаççĕ.

Çулталăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те чакаксене çынсем пурăнакан вырăнсенче курма пулать. Чăнах та, çу кунĕсенче вĕсем пирĕн пата сайра килсе çӳреççĕ. Пĕтĕм тавралăха çутă хĕвел ачашлама пуçласан çĕр çырлисем хĕрелсе пыллă сĕткенпе тулаççĕ те – чакаксене те хăйсем патне илĕртеççĕ. Хăяккăн-хăяккăн та – улмуççи çине ларать. Пуçне лăк-лăк силлет, йĕри-тавра пăхать: хуралçă çук. Пĕр куç хупăмĕнче – йăран çине чăмать. Пĕр çырлине сăхать, теприне... Çырли эслепсĕр! Кайран ăна хытă ятлаççĕ, хăрушă хăртаççĕ: «Чакак-шаймак!..» Çырлана çеç тапăнать-и? Çук! Чăх, хур-кăвакал чĕпписене вăрлать имĕш. Тепĕр чух ылтăн сехете те тиркемест – çĕклет те вĕçет.

Кил хушшинче – кĕркунне. Унпа пĕрле – чакак та. Кунта сăмсипе мĕн те пулин сăхмалли, çилĕм чĕлхипе хĕстермелли тупатех вăл.

Анне ирхи апат юлашкине йытта пама тухрĕ. Шарик мĕшĕлтетет, пуçне сĕлтесĕлте киленсе çиет. Хăй айăплă, хăнасене – икĕ чакака – чĕнсе илчĕ. Лешсем лараççĕ хапха çинче: кăн-кан пăхкалаççĕ, хӳрисене вылятаççĕ. Йытă тарăхать, хăрлатать, хӳрине çĕклет, енчен енне сулкалать, кайăксене çилленсе вĕрет. Чакаксем хăнк та тумаççĕ. Иккĕш те çĕре вĕçсе анчĕç. Пĕри хăюллăрах, Шарик умнех çитсе тăнă, йытта çĕтĕлтерет. Тепри ун хыçĕнче, хальхаль сикме хатĕр тăрать. Кил хуралçи чăтаймарĕ, умĕнчи пуçтах çине йăкăлт сикрĕ. Иккĕмĕшне çак çеç кирлĕ. Кап çаклатса илчĕ те пысăк татăкпа – тӳрех хапха тăррине. Вăт чакак – çăп-çăмăл шăмшак! Тепĕр самантран кайăксем вырăнпа ылмашăнчĕç, Шарике каллех улталарĕç. Çапла тăранчĕç, пĕртте чаклатмарĕç, хапха тăрринче шăппăн çеç ларчĕç...

Пĕррехинче ялти ятлă-сумлă сунарçă Çемкка пичче мана хăйпе пĕрле сунара пыма чĕнчĕ. Пăшал çакрăмăр, йĕлтĕр сыртăмăр – шутартăмăр хайхи Телнер вăрманĕн пуçне. «Тилĕ тытма улăм ури кутне капкăн лартрăм, – ăнлантарчĕ ватă сунарçă. – Пĕрех пырса кĕрет Çӳлти урама. Кăштах кăтартмăш, чун йăпатмăш çук та... Ик эрнере виçĕ чăхха çаклатрĕ. Йĕрĕ çине аран ӳкрĕмĕр»...

Чăн та, улăмури – вăрман çумĕнчех. Çемкка пичче тем ӳкеркелеме тытăнчĕ те чарăнса тăчĕ. Эп пыратăп çамрăк чăрăшсен хушшипе, йĕлтĕрсене хуллен те шăппăн тĕксе. Сывлама хăратăп. Трук юнашарах: «Чĕр-р-р-р... че-чĕр». Эп сана! Кала-ха, ăçтан килсе тухрăн эс? Э-эй, чакак шур аяк, ан чăрмантар, кан пăртак!

Ăçта вăл? Çӳлте. Йывăç вулли çумĕнче вăрăм та хуп-хура хӳри курăнать...

Манăн кайăка вăрçас килет. Чакак турат çине меллĕн вырнаçса ларчĕ те ун-кун пăхкалать, малтанхи пекех васкамасть: «Чĕр-чĕр... Чĕр-р-р». Мана ăнлантарать ĕнтĕ: «Тилĕ капкăна çакланнă!» Улăм ури еннелле пуça çĕклетĕп те – унта, шапшурă юр çинче, Çемкка пиччем йăм хĕрлĕ тилле турткалать. Чăн та, çакланнă!

– Ăслă-çке эс, чакак-шур аяк! – кăшкăратăп кайăка. – Пулать сана парне!

Чакак çăмăл çуначĕсене сулласа çӳлелле çĕкленчĕ те Телнер вăрманĕ тăрăх çĕнĕ хыпар илсе кайрĕ: вăрра тытнă!

Э-эй, чакак – хура кусак, шап-шурă аяк! Йăрă та алмак кайăк. Вăйçах. Илемлĕ кайăк. Çынсем ăна: «Чакак-шаймак, шапăлкка та мăкăлтак, ытла ĕнес, сăмсу та сан авмак, куçу армак-чармак», – текелеççĕ. Кӳренмелле сăмахсем çыпăçтараççĕ чакак çумне.

Мĕншĕн? Хӳрипе хыпарсем «çĕклесе» çӳренĕшĕн-ши? Сунарта е пулăра кансĕрлет-и? Вăрă-и? Нумай çĕклесе каять-и? Çунатти çинче кутамкка çук-çке, сăмсипе çеç çĕклет. Çынна сиен мĕн чухлĕ тăвать? Хăш-пĕр хурчка çу каçиччен вун-вун чăх чĕппи çаклатать, анчах ăна вăрă тесе вăрçмаççĕ.

Чакак çынран ĕçме-çиме ыйтмасть, хăйне хăех тăрантать. Таса кайăк. Хăйĕн тĕкĕсене нихçан та варламасть. Тата типтерлĕ, пуçтарулла санитар. Ялта санитар ĕçне тĕплĕн тăвать.

Кайăка вăрçма, ăна хăртма питĕ ансат. Унпа туслашма, ăна кӳрентермесĕр пурăнма – самай йывăр. Ача-пăча ку тĕлĕшпе пуçарулларах. Ахальтен мар: «Эс, чакак, шур аяк, вĕрентсем вĕçме ху май!..» – тесе юрлаççĕ.

Айăплă эпир сан умра, чакак-хура кусак, шап-шур аяк, каçарсам. Ялан пирĕнпе юнашар пурăн. Мĕнле пурăннă – çаплах. Мĕнле пурăнас килет – çаплипех. Юрать-и?

■ **Герман ЖЕЛТУХИН.**

Куславкка районĕ

